ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН
САККУНЕ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ ВЁРЕНӲ ÇИНЧЕН" САККУННЕ УЛШĂНУСЕМ КЁРТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ
2024 çулхи юпа уйăхĕн 8-мĕшĕнче
йышăннă

1 статья

Чăваш Республикин "Чăваш Республикинчи вĕренӳ çинчен" 2013 çулхи утă уйăхĕн 30-мĕшĕнчи 50 №-лĕ саккунне (Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2013, 7 №; 2014, 3, 6, 11, 12 №-сем; 2015, 6, 10, 12 №-сем; 2017, 2, 9 №-сем; "Республика" хаçат, 2018, çĕртме уйăхĕн 27-мĕшĕ, авăн уйăхĕн 26-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 26-мĕшĕ; 2019, авăн уйăхĕн 18-мĕшĕ; 2020, пуш уйăхĕн 11-мĕшĕ, утă уйăхĕн 15-мĕшĕ; 2021, нарăс уйăхĕн 17-мĕшĕ, нарăс уйăхĕн 25-мĕшĕ, юпа уйăхĕн 27-мĕшĕ; 2022, утă уйăхĕн 13-мĕшĕ, авăн уйăхĕн 28-мĕшĕ, чӳк уйăхĕн 9-мĕшĕ; "право21.рф" сеть кăларăмĕ, 2022, чӳк уйăхĕн 21-мĕшĕ, 0000000000000244 №; "Республика" хаçат, 2022, раштав уйăхĕн 28-мĕшĕ; "право21.рф" сеть кăларăмĕ, 2023, нарăс уйăхĕн 22-мĕшĕ, 0000000000000758 №; "Республика" хаçат, 2023, чӳк уйăхĕн 29-мĕшĕ) çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1) 7 статьяра:

а) 1-мĕш пунктра "Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн органĕн" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕн" сăмахсемпе улăштарас;

ă) 2-мĕш пунктра "Чăваш Республикин ĕç тăвакан власть органĕн" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕн" сăмахсемпе улăштарас;

2) 9 статьяра:

а) ятĕнче "Чăваш Республикин ĕç тăвакан власть органĕсен" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕсен" сăмахсемпе улăштарас;

ă) 1-мĕш пайăн пĕрремĕш абзацĕнче "Чăваш Республикин ĕç тăвакан власть органĕн" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕн" сăмахсемпе улăштарас;

б) 2-мĕш пайăн пĕрремĕш абзацĕнче "Чăваш Республикин ĕç тăвакан власть органĕн" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕн" сăмахсемпе улăштарас;

3) 10 статьян 2-мĕш пайĕнче "Чăваш Республикин ĕç тăвакан власть органĕ" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕ" сăмахсемпе улăштарас;

4) 11 статьяра:

а) 1-мĕш пайра "Чăваш Республикин ĕç тăвакан власть органĕсем" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕсем" сăмахсемпе улăштарас;

ă) 2-мĕш пайра "Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн органĕ" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕ" сăмахсемпе улăштарас;

б) 4-мĕш пайăн пĕрремĕш абзацĕнче "Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн органĕ" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕ" сăмахсемпе улăштарас;

5) 12 статьяра:

а) 1-мĕш пайра "Чăваш Республикин ĕç тăвакан власть органĕсем" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕсем" сăмахсемпе улăштарас;

ă) 2-мĕш пайăн çиччĕмĕш абзацĕнче "Чăваш Республикин ĕç тăвакан власть органĕ" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕ" сăмахсемпе улăштарас;

6) 13 статьяра:

а) 2-мĕш пайра "Чăваш Республикин ĕç тăвакан власть органĕ" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕ" сăмахсемпе улăштарас;

ă) 3-мĕш пайра "Чăваш Республикин ĕç тăвакан власть органĕ" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕ" сăмахсемпе улăштарас;

б) 4-мĕш пайра "Чăваш Республикин ĕç тăвакан власть органĕ" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕ" сăмахсемпе улăштарас;

7) 14 статьяра:

а) ятне ". Вĕренекенсене тумтирпе тивĕçтересси" сăмахсем хушса хурас;

ă) 1^2-мĕш пайра:

çакăн пек çырса 5^1-мĕш пункт хушса хурас:

"5^1) Чăваш Республикин территорийĕнче вырнаçнă федерацин патшалăх органĕсен территори органĕсен ятарлă çар операцине хутшăнакан ĕçченĕсен;";

6-мĕш пунктра "2–5-мĕш пункчĕсенче" сăмахсене "2–5^1-мĕш пункчĕсенче" сăмахсемпе улăштарас;

б) 4-мĕш пайра "палăртнă йĕркепе" сăмахсене "палăртнă йĕркепе тата условисемпе" сăмахсемпе улăштарас;

в) çакăн пек çырса 5-мĕш тата 6-мĕш пайсем хушса хурас:

"5. Нумай ачаллă пĕчĕк тупăшлă çемьесенче пурăнакан, Чăваш Республикин территорийĕнче вырнаçнă пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан организацисенче, професси пĕлĕвĕ паракан вĕренӳ организацийĕсенче, аслă пĕлӳ паракан вĕренӳ организацийĕсенче Чăваш Республикин республика бюджечĕн укçи-тенки шутĕнчен вĕренекенсем икĕ хутчен тӳлевсĕр апатланма пултараççĕ.

Нумай ачаллă пĕчĕк тупăшлă çемьесенче пурăнакан, Чăваш Республикин территорийĕнче вырнаçнă пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан организацисенче, професси пĕлĕвĕ паракан вĕренӳ организацийĕсенче, аслă пĕлӳ паракан вĕренӳ организацийĕсенче Чăваш Республикин республика бюджечĕн укçи-тенки шутĕнчен вĕренекенсене икĕ хутчен тӳлевсĕр апатлантарас ĕçе Чăваш Республикин республика бюджечĕн укçи-тенки шучĕпе Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ палăртнă йĕркепе тата условисемпе пурнăçлаççĕ.

Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене нумай ачаллă пĕчĕк тупăшлă çемьесенче пурăнакан, муниципаллă пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан организацисенче вĕренекенсене икĕ хутчен тӳлевсĕр апатлантарассине йĕркелес тата тивĕçтерес ĕçе пĕрле укçа-тенкĕ уйăрма Чăваш Республикин республика бюджетĕнчен Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ палăртакан виçепе, йĕркепе тата условисемпе субсидисем уйăрса пама пултараççĕ.

6. Нумай ачаллă пĕчĕк тупăшлă çемьесенче пурăнакан, Чăваш Республикин территорийĕнче вырнаçнă пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан организацисенче вĕренекенсем вĕренӳ занятийĕсене вĕренӳ тапхăрĕ тăршшĕпех çӳреме кирлĕ тумтире, çавăн пекех спорт формине палăртнă нормативпа килĕшӳллĕн

Чăваш Республикин республика бюджечĕн бюджет укçи-тенки шутĕнчен илсе тăма пултараççĕ.

Нумай ачаллă пĕчĕк тупăшлă çемьесенче пурăнакан, Чăваш Республикин территорийĕнче вырнаçнă пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан организацисенче вĕренекенсене вĕренӳ занятийĕсене вĕренӳ тапхăрĕ тăршшĕпех çӳреме кирлĕ тумтирпе, çавăн пекех спорт формипе палăртнă нормативпа килĕшӳллĕн Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ палăртнă йĕркепе тата условисемпе Чăваш Республикин республика бюджечĕн бюджет укçи-тенки шутĕнчен тивĕçтерсе тăраççĕ.";

8) 15 статьян 2-мĕш пайĕнче "Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн органĕ" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕ" сăмахсемпе улăштарас;

9) 16^1 статьян 2-мĕш пайне çакăн пек çырса хурас:

"2. Пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан организацисенче, професси пĕлĕвĕ тата аслă пĕлӳ паракан вĕренӳ организацийĕсенче кăнтăрлахи уйрăмра пĕлӳ илекен, хулара тата (е) хула çумĕнче çӳрекен пурте усă куракан автомобиль транспорчĕпе тата (е) хулара çĕр çинче çӳрекен пурте усă куракан электричество транспорчĕпе, тата (е) муниципалитетсем хушшинчи тăтăш турттармалли маршрутсем тăрăх çĕр çинче çӳрекен пурте усă куракан электричество транспорчĕпе, тата (е) Чăваш Республикин территорийĕнче хула çумĕнчи пурте усă куракан чукун çул транспорчĕпе хăйсем пурăнакан вырăнтан вĕренӳ вырăнне çӳреме çул çӳремелли билетсем кирлĕ, пĕчĕк тупăшлă çемьесенчи, çав шутра нумай ачаллă çемьесенчи вĕренекенсене Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ палăртнă йĕркепе тата виçепе социаллă пособисем тӳлеççĕ.";

10) 18 статьяра:

а) 2-мĕш пайра "Чăваш Республикин ĕç тăвакан власть органĕ" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕ" сăмахсемпе улăштарас;

ă) 3-мĕш пайра "Чăваш Республикин ĕç тăвакан власть органĕ" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕ" сăмахсемпе улăштарас;

11) 19 статьян 4-мĕш пайĕнче "Чăваш Республикин ĕç тăвакан власть органĕ" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕ" сăмахсемпе улăштарас;

12) 21 статьян 1-мĕш пайĕнче "Чăваш Республикин ĕç тăвакан власть органĕ" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕ" сăмахсемпе улăштарас;

13) 22 статьяра:

а) 1-мĕш пайра "Чăваш Республикин ĕç тăвакан власть органĕ" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕ" сăмахсемпе улăштарас;

ă) 2-мĕш пайра "Чăваш Республикин ĕç тăвакан власть органĕ" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕ" сăмахсемпе улăштарас;

б) 3-мĕш пайра "Чăваш Республикин ĕç тăвакан власть органĕ" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕ" сăмахсемпе улăштарас;

14) 24 статьян 4-мĕш пайĕн пĕрремĕш абзацĕнче "Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн органĕн" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕн" сăмахсемпе улăштарас;

15) 25 статьяра:

а) ятĕнче "Чăваш Республикин ĕç тăвакан власть органĕсене" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕсене" сăмахсемпе улăштарас;

ă) пĕрремĕш абзацра "Чăваш Республикин ĕç тăвакан власть органĕсене" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕсене" сăмахсемпе улăштарас;

б) иккĕмĕш абзацра "Чăваш Республикин ĕç тăвакан власть органĕ" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕ" сăмахсемпе улăштарас;

в) виççĕмĕш абзацра "Чăваш Республикин ĕç тăвакан власть органĕсене" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕсене" сăмахсемпе улăштарас, "Чăваш Республикин ĕç тăвакан власть органĕ" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕ" сăмахсемпе улăштарас.

2 статья

1. Çак Саккун ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кунран пуçласа вăя кĕрет.

2. Çак Саккунăн 1 статйин 7-мĕш пункчĕн тăваттăмĕш–улттăмĕш, саккăрмĕш – вун виççĕмĕш абзацĕсен, 9-мĕш пункчĕн положенийĕсен вăйĕ 2024 çулхи авăн уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçланнă право хутшăнăвĕсене пырса тивет.

Чăваш Республикин

Пуçлăхĕ — О. Николаев

Шупашкар хулли

2024 çулхи юпа уйăхĕн 8-мĕшĕ

53 №